Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

80 (7397) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи сентябрĕн (авăн) 23-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

“Иккĕмĕш çăкăр” пуссинче

## “Атте-анне ĕçне сая ярас мар”,–

### тесе ĕçлеççĕ паян нумай шкул ачисем пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен хирĕсенче

Çу кунĕсенче ыйхă вĕçтерсе ĕçленĕ хыççăн паян тепĕр хут çанă тавăрса ĕçе кӳлĕнмесĕр хĕл тутă пулас-кашни минутпа туллин усă курмалла. Пулса тухнă лару-тăрăва ăнланса ку чухне кашниех хресчене вăй семпе Тойкильтĕри вăтам шкул ачисем пĕр коллектив пулса çĕр улми пуссине иртнĕ ытлари кун тухрĕç. Александр Александровпа Геннадий Семенов тата Юрий Николаев механизаторсем тытса пыракан икĕ трактор иртен пуçласа каçченех хирте копалкăпа çĕр улми кăлараççĕ. Акă, иртнĕ çул кредитпа илнĕ МТЗ-82 трактор иртсе кайрĕ те 5-мĕш класра вĕренекен Леонид Евстафьевпа Наталья Кузнецова **(сăн ўкерчĕкре)** тупăшса çĕр улми пуçтарма пуçларĕç. Вĕсенчен кăшт маларахра ĕçлекен Маша Михайлова (8-мĕш класс) вара тулли витрене йăтса пушатма михĕ патнелле





си пирки шутлани вырăнлă та мар. Çакна паян ялта пурăнакан кашни чĕрĕ чун ăнланать.

Йĕркеленсе çитнĕ ылтăн кĕркуннепе усă курса районăн кăçал 1365 гектар çинчен çĕр улми пуçтарса кĕртмелле. Уйрăмах пысăк лаптăксем “Ударник” (310 гектар), “Свобода” (220 гектар) хуçалăхсенче. Лаптăкĕ пысăк-и е пĕчĕк, анчах ăна пурпĕрех çухатусемсĕр пуçтарса илмелле. Çĕр ĕçченĕ умĕнче паян урăхла тĕллев çук та.



Çумăрлă çанталăк кĕрхи ĕçсене пурнăçлассине кăçал чылай хыçалалла куçарчĕ. Çавăнпа та хресченĕн паян уяр тăракан çитнĕ таран пулăшма тăрăшать. Пĕтĕмĕшле йышра шкул ачисем те.

Ленин яч. хис. хуçалăхра “иккĕмĕш çăкăра” кăçал 50 гектар çинче лартса ӳстернĕ. Çанталăк условийĕсене кура хуçалăх ĕçченĕ-васкарĕ те **(иккĕмĕш сăн ўкерчĕкре).**

Хуçалăх ертӳçи Андрей Владимирович Гаврилов та кунтах. Кашни техника çине пысăк шанчăкпа пăхать вăл.

– Кĕрхи уй-хир ĕçĕ кирек хăш ĕçченшĕн те чи ответлă самант. Çавăнпа хамăра пулăшма тухнă шкул ачисене, учительсене пысăк тав,– терĕ ачасем ĕçленине тинкерсе А. Гаврилов самантлăха чарăннă копалка патĕнче Г. Семенов тата А. Александров механизаторсемпе **(виççĕмĕш сăн ўкерчĕкре)** тухакан çĕр улмине хак парса.

... Копалка малалла кайрĕ. Ачасем пĕр çын пек çĕр улми пуçтараççĕ. Хыçра вара тулли михĕсен пысăк çарĕ. Çанталăк уяр. Апла пулсан ĕçлемелле те ĕçлемелле.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕсем.**

## Саламлатпăр

Хисеплĕ мăшăра, юратнă аттене тата хуньстарике, ырă кăмăллă асаттепе кукаçие, вашават тăванăмăра Кашмаш ялĕнче çуралса ӳснĕ, “Свобода” пĕрлешӳллĕ хуçалăхра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă **Петр Алексеевич БЕЛОВА** 65 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Ĕçре ирттернĕ пурнăçу ватлăх çулĕсенче ачусен ӳсĕмĕпе, мăнукусен куллипе, тăванусен хисепĕпе тулса илемленессе шанса тăратпăр. Çак çул-йĕрпе кайса санăн татах нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр, телей кайăкĕ çулунтан ан пăрăнтăр.

**Салампа: мăшăрĕ, 4 ывăлĕпе 3 кинĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, 7 мăнукĕ, йышлă тăванĕсем.**

Чуманкассинче пурăнакан юратнă мăшăра, аннене, хуньямана, асанне-кукамая тата çывăх тăванăмăра **Анфиса Ивановна НИКОЛАЕВАНА** 65 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Ĕç ĕмĕрне шкулта вĕрентсе çĕршер ачана тарăн пĕлӳ парса пурнăç çулĕ çине кăлартăн, çĕршывшăн усăллă çынсем турăн. Ырă ĕçре ирттернĕ пурнăçу санăн вăрăм, сывлăху çирĕп, ватлăху лăпкă та телейлĕ килтĕр, мăнукусен савăнăçлă сасси кун-çулна илем кӳтĕр. Эсĕ пирĕн телей.

**Салампа: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 5 мăнукĕ, тăванĕсем.**

Малиновкăра пурăнакан хăйматлăх аттене **Юрий Николаевич ОРАИНА** çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Кун-çулу вăрăм та телейлĕ, сывлăху çирĕп пултăр. Çемьере тату пурнăçпа килĕшӳ хуçаланччăр. Инкек-синкек сирĕн çемье тĕлне çывăха пыма та ан хăйтăр. Пурнăç çулĕ санăн такăр та уçăмлă пултăр.

**Çурлатринчи Аленăпа Виктор Аксендаровсем, вĕсен хĕрĕ Евгения.**



Кашмаш ялĕнче пурăнакан пирĕн чи хаклă çынна, юратнă мăшăра, аннене, ытарайми кукамая **Вера Васильевна МАЙОРОВАНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн пуç тайса саламлатпăр. Аннеçĕм! Эсĕ пирĕншĕн ăшă кăмăл çăл куçĕ, ăс-тăн, вăйхал паракан, юратăвăн сӳнми хĕлхемĕ, ырă тĕслĕх. Эс пурри – пирĕн пуянлăх, савăнăç. Малалла та пурнăçăн тумхахлă та анлă çулĕпе йывăрлăхсене çĕнтерсе шанчăклă утса пыма çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, пархатарлă кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Çĕр çул пурăн, ан чирле.

**Чи ăшă та хĕрӳ салампа мăшăрĕ, 3 хĕрĕпе кĕрĕвĕсем, 5 мăнукĕ, тăванĕсем, хăти-тăхлачисем.**

ЧР Ял хуçалăх министерствипе патшалăх ветеринари службин районти кунĕнчен

## Хумхантаракан ыйтусем çук мар

Юн кун республикăра министерствăсемпе патшалăх службисен кунĕ иртрĕ. Çавна май пирĕн района ЧР Ял хуçалăх министерствин кадр политикипе тата вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе ĕçлекен пай ертӳçи Г.П. Таланцева, апат-çимĕç промышленноç секторĕн ертӳçи Е.Ю. Таланова, ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе ĕçлекен пай пуçлăхĕ В.Н. Герасимов тата ЧР Патшалăх ветеринари службин ертӳçи В.К. Тихонов килчĕç. Вĕсем чи малтанах район пуçлăхĕпе Ю. Ивановпа тĕл пулчĕç.

Тĕпрен илсен, калаçу вырма ĕçĕсем, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрлес, ялсем патне асфальт çул сарас тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсене суйлас ыйту тавра пулчĕ. Килнĕ представительсем 2 ушкăна пайланса, район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç. Тĕл пулусенче сăмах çӳлерех асăннă çак темăсем тавра пулчĕ. Ял çыннисене хумхантаракан ыйтусем çине хуравларĕç.

Пĕрремĕш ушкăн чи малтанах Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхăн Отарккăри сĕт-çу ферминче пулса курчĕ. Кунта кулленхи сăвăм пĕчĕк пулни хăйсен тивĕçĕсем çине епле пăхни, вăхăт 10 сехет иртнĕ пулин те ĕнесем уя тухманни – йăлтах пĕр япала çинчен калать: кунти лару-тăрăва тĕпренех улăштармалла: ĕç дисциплининчен пуçласа, кадрсем таранах.

Хуçалăх ертӳçипе В.П. Морозовпа Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева фермăри лару-тăрăва лайăхлатассипе пĕр тĕллевлĕ пулни, ку тĕлĕшпе плансем пурри шанăç парать.

Ун хыççăн асăннă хуçалăхăн йĕтемĕ çинче ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕç министерство кунне хутшăнакансем. Сăмах кунта наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма паракан çăмăллатнă кредитсем ял халăхĕшĕн усăлли пирки пулчĕ. Çакна та палăртмалла, ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров нумаях пулмасть район, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе, предприяти ертӳçисемпе ирттернĕ канашлура çакăн пирки те палăртнă: килти хушма хуçалăха аталантарма паракан кредитпа шыв, газ, электролини, телефон кĕртнĕ чухне те усă курма юрать. Тĕл пулура Е.Ю Таланова районта пурăнакансене Шупашкарта пирĕн района валли уйăрнă 8 вырăнта çĕр улми тата ытти пахча çимĕçсем сутма пыма чĕнчĕ. Иртнĕ канмалли кунсенче унта çĕр улми 4-4,5 тенкĕпе сутнă. Вырăн укçи те илмеççĕ. Хăвăр Муркаш районĕнчен иккенне çирĕплетме паспорт çеç кăтартмалла.

Тĕл пулура Отарккăсем газ кĕртнĕ чух тăкакланă хăйсен укçи-тенкине тавăрса парас ыйтăва хускатрĕç. Çавăн пекех ялта пурăнакансене çурт-йĕр çаварма пулăша-



кан программăсем пирки те ыйтусем пулчĕç. Вырăнтах конкретлă хуравсем илчĕç.

Юнашарти Чкалов яч.хис. хуçалăхри ĕне ферминче вара лару-тăру кăмăла çĕклет. Кунне паян кунта кашни ĕнерен вăтамран 11 килограмм сĕт сăваççĕ. Иртнĕ çулхинчен ӳсĕмлĕрех ку кăтарту. Ферма коллективĕ те хăйĕн тивĕçĕсене чун-чĕререн пурнăçлани куçкĕретех. Хуçалăхăн çĕнĕ ертӳçин П. Ефимовăн халăхпа пĕр-пĕринпе ăнланса ĕçлеме кăмăл та пысăк: хуçалăх паян ĕне фермине реконструкцилесе çĕнĕ технологи çине куçас тĕллевпе нумай вăхăтлăх кредит илме хатĕрленет.

“Ударник” хуçалăхри лару-тăрупа паллаштарнă май вара унăн ертӳçи П.П. Давыдов хăйсен ĕçне критикăлла хак пачĕ.

– Çĕр улми кăларма пĕр эрне маларах тухмаллаччĕ, - терĕ вăл.

Паян вара унта уяр кунăн кашни саманчĕпе усă кураççĕ. Тыр-пула пухса кĕртсе пĕтернĕпе пĕрех кунта. Вăтам тухăç 25 центнер. Вăрманкасси уйрăмĕнче вара – 36 центнерпа танлашать. Платон Павлович çакăн вăрттăнлăхне иртнĕ кĕркунне пĕтĕм çĕрте кĕрхи çĕртме сухи тунипе çыхăнтарать. Çак ĕçе паян тума васкаман хуçалăхсен ертӳçисем çак сăмахсене хăлхана чиксен çав тери аванччĕ:

– Ăçта кĕрхи çĕртме сухи туман, унта тухăç шăп 2 хут пĕчĕкрех, - терĕ Платон Павлович, тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ.

Çĕр улмине вара Йӳçкасси тăрăхĕсем куллен 500-шер тонна кăларса илме тĕллев лартнă. Паян “иккĕмĕш çăкăра” кăларакан 4 комбайн уйра. Пуçтарса çеç ĕлкĕр. Шкул ачисене яланах пулăшма хатĕр “Ударник” уйĕнче паян Йӳçкассисемпе Чуманкасси шкул ачисем ĕçлеççĕ. Вĕсен йышне кĕçех Тивĕшсемпе Шетмĕпуççем хутшăнĕç, К. Иванов ячĕллĕ хуçалăхран 30ăн, районти тĕп больница ĕçченĕсем хутшăнĕç. Директор çумĕ В.З. Иванов сăмахĕсем тăрăх, виçĕм кун “Ударник” уйĕнче çĕр улми пуçтаракансем 2-шер тонна пуçтарнă ăна.

Хуçалăх столовăй умĕнче ĕç çыннисемпе иртнĕ тĕл пулура та çӳлерех асăннă ыйтусем тавра калаçу пулчĕ. Кунти пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕнче чирлисене выртса сипленме майсем пуласси те савăнтарчĕ. Ял урамĕсенче электричество хунарĕсем çутманни те татса памалли ыйтăвах. Çак эрнерех ку çитменлĕхе пĕтереççĕ.

Очăкасси шкулĕнче ĕçлекен учительсене те хумхантаракан ыйтусем çук мар. Шкул патне асфальт çул кирлĕ. Çывăхрах моделлĕ библиотека пулсан аванччĕ. Çавна валли çурт та пур. Ялта çурт çаварнă чухне патшалăх пулăшăвĕн хăш тĕсĕпе усă курсан усăллă пулнă пирки те пулчĕ ыйту.

– Упăшкан ĕç вырăнĕ çуккипе ача укçи илейместĕп. Ача айăплă-им çакăншăн? Паян районти 100-шер çынăн çак чун ыратăвне те республика шайĕнче татса пама ыйтма вăхăт.

Министерство кунне хутшăнакансем кашни ыйтăва татса памалли хуравсем, сĕнӳсем пачĕç. Вырăнта татса пама май çуккисене министерство шайĕнче татса пама шантарчĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Сăн ўкерчĕкре: тĕл пулу вăхăтĕнче.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

Çырăнтару-2007

### Çитес çул илсе тăма

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. 6 уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.***

***Хаçата вăхăтра çырăнса илме тăрăшăр.***

**Район хаçачĕн редакцийĕ.**